Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчене тухать

12 (7866) № ✻ *Шӑмат кун, 2011 ҫулхи нарӑс (февраль) уйӑхӗн 19-мӗшӗ* ✻ *Хакӗ ирӗклӗ*

## Ӗҫлеме пултаратпӑр, ҫитменлӗхсене те курмаллах



**Район кунне палӑртрӑмӑр**

Иртнӗ юн кун, нарӑс уйӑхӗн 16-мӗшӗнче, район администрацийӗн ларусем ирттермелли залӗнче Муркашсем пӗрле пухӑнса районӑмӑрӑн черетлӗ ҫуралнӑ кунне паллӑ турӗҫ. Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫи кӗрленӗ 1944 ҫулхи нарӑс уйӑхӗнче ҫӗнӗ тытӑмра пӗрремӗш утӑм тунӑ Муркаш ен паян чылай ӗҫре ыттисемшӗн тӗслӗх пулса тӑрать. Ҫапах кая хӑвармасӑр татса памалли ыйтусем те ҫук мар. Ҫакна районӑмӑр 67 ҫул тултарнине халалласа ирттернӗ пухура район пуҫлӑхӗ И. Николаев тата район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ю. Иванов тунӑ докладсем та кӑтартса пачӗҫ. Ку вара кашни ҫынра ҫӗнӗ ӗмӗт-тӗллев ҫуратмалла.

Районӑмӑр кунӗ ячӗпе ирттернӗ савӑнӑҫлӑ пуху кӑҫал район тулашӗнче мар, хамӑр тӑван килтех иртрӗ. Палӑртнӑ вӑхӑта ӗҫ коллективӗсен делегацийӗсем район администрацийӗн ларусем ирттермелли залне пухӑнса ҫитрӗҫ. Халӑх йышлӑ ҫӳремелли вырӑнсенче район администрацийӗн культурӑпа архив ӗҫӗсен пайӗ йӗркеленӗ выставкӑсем, Муркашпа Мӑн Сӗнтӗр райповӗсем пуҫарнӑ суту-илӳ тата кунти техӗмлӗ кукӑль шӑрши уяв чапне ӳстерчӗҫ кӑна.

Вӑхӑт ҫитнипе район пуҫлӑхӗ И. Николаев ларӑва пуҫласси пирки пӗлтерчӗ. Хыҫҫӑн Игорь Васильевич пухӑннисене депутатсен районти Пухӑвӗн пӗлтӗрхи ӗҫӗ-хӗлӗпе, умри тӗллевӗсемпе паллаштарчӗ. Район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ю. Иванов хӑйӗн докладӗнче район утса иртнӗ ҫул-йӗр, малта пыракансем тата кая юлмасӑр малалла туртӑнмалли коллективсем ҫинче чарӑнса тӑнӑ май Муркаш енӗн иртнӗ ҫулхи экономикӑпа социаллӑ аталанӑвӑн утӑмӗсене пӗтӗмлетрӗ.

– Раҫҫей Президенчӗ Д. Медведев вырӑнти хӑй тытӑмлӑха аталантарассине патшалӑхӑн тӗп задачисенчен пӗри тесе палӑртрӗ. Вырӑнти хӑй тытӑмлӑхӑн граждансене ҫӳлти хушусене кӗтмесӗрех ытларах ыйтусене хӑй тӗллӗн татса пама ҫул уҫса памалла. Депутатсен районти Пухӑвӗ хӑйӗн ӗҫне ҫак енпе йӗркелесе пырать те. Паян цифрӑсем ҫинче чарӑнса тӑмастӑп, анчах депутатсен тӗп ӗҫӗ вӑл – районӑн экономикӑпа социаллӑ аталанӑвне пур енлӗ те ӳсӗмлӗ вӑй илсе пыма тивӗҫлӗ нормӑпа право акчӗсем йышӑнасси тата районта пурӑнакансен пурнӑҫне лайӑхлатасси. Пирӗн тӗп тӗллев – федераллӑ тата республика саккунӗсене пӑхӑнакан тата эффективлӑ ӗҫлекен системӑна тытса пырасси. Ҫакӑ вӑл паян 67 ҫул тултаракан районӑн кулленхи ӗҫӗ-хӗлӗ, – терӗ савӑнӑҫлӑ пухӑва уҫнӑ май район пуҫлӑхӗ И. Николаев.

Район ял хуҫалӑх продукцине туса илессипе специализациленнӗрен иртнӗ ҫулхи кӑтартусем шӑрӑх ҫанталӑк условийӗсенчен тухса тӑнине пытармалли ҫук. Районта пурӑнакансем пӗлтӗр ял хуҫалӑх продукцине пӗтӗмпе 1 миллиард та 559 миллион тенкӗлӗх (унччченхи ҫулхинчен 83,4 процент) туса илнӗ.

**(Вӗҫӗ 2 стр.).**

**Сӑн ӳкерчӗкре: Чӑваш Республикин Президенчӗн стипендине тивӗҫнисен йышӗ пысӑкки районӑн малашлӑхӗ ҫирӗп алӑра пулни пирки калать.**

**А. БЕЛОВ**
**сӑн ӳкерчӗкӗ.**

## Чӑваш ятне тӗнче уҫлӑхне ҫӗклерӗ

**Ентешӗмӗре халалласа**

***Кӑҫал эпир Юрий Гагарин пӗрремӗш хут космоса вӗҫнӗренне 50 ҫул ҫитнине паллӑ тӑватпӑр. 1961 ҫулхи апрелӗн 12-мӗшӗнче вӑл тӗнче уҫлӑхне парӑнтарнӑ, пуҫласа ҫул хываканӑн тата геройӑн мухтавне тивӗҫнӗ. Ҫавна шута илсе 2011 ҫула Раҫҫей космонавтикин ҫулталӑкӗ тесе йышӑннӑ.***

2012 ҫулхи август уйӑхӗнче вара пирӗн мухтавлӑ ентеш, летчик-космонавт Андриян Николаев пӗрремӗш хут космоса вӗҫнӗренпе 50 ҫул ҫитет. Унӑн чӑваш халӑхӗ умӗнчи тава тивӗҫлӗ ӗҫӗсене шута илсе вӑрҫӑ, ӗҫ, Хӗҫ-пӑшаллӑ вӑйсен тата правӑна сыхлакан органсен ветеранӗсен (пенсионерсен) Чӑваш Республикинчи обществӑлла организацийӗн президиумӗ А.Г. Николаева халалласа скульптура композицийӗ хатӗрлесе вырнаҫтарма халӑхран укҫа-тенкӗ пухма йышӑну тунӑ. Ҫак йышӑнӑва асӑннӑ организаци пленумӗ те ырланӑ. Ӑна 2011 ҫулхи августӑн 11-мӗшӗнче уҫма палӑртнӑ. Ҫавӑнпа та укҫа-тенкӗне 2011 ҫулхи майӑн 1-мӗшӗччен пухса пӗтерни питех те пысӑк пӗлтерӗшлӗ.

Ветерансемпе пенсионерсем укҫа-тенкӗне ведомоҫпе ветерансен пуҫламӑш, район тата хула канашӗсене пама пултараҫҫӗ. Ытти граждансен, учрежденисен, организацисен, предприятисен, обществӑлла организацисен тата политика партийӗсен вара укҫа-тенкӗне ветерансен республикӑри канашӗн счечӗ ҫине куҫармалла, «на установку памятника А.Г. Николаеву» тесе паллӑ туни пулмалла.

Ветерансен республикӑри канашӗн пуҫарӑвне Чӑваш Республикин Президенчӗ М.В. Игнатьев та ырланӑ.

Сире хамӑрӑн реквизитсене пӗлтеретпӗр:

ИНН/КПП 2128020854/213001001

Вӑрҫӑ, ӗҫ, Хӗҫ-пӑшаллӑ вӑйсен тата правӑна сыхлакан органсен ветеранӗсен (пенсионерсен) Чӑваш Республикинчи обществӑлла организацийӗ.

Р/с 40703810775220100068 в Чувашском ОСБ № 8613 г. Чебоксары

БИК 049706609

К/с 30101810300000000609

ОКПО 24371114

Пур ыйтупа та ҫак адреспа пымалла: Шупашкар хули, Гагарин урамӗ, 20-мӗш ҫурт, 201-мӗш пӳлӗм, ветерансен республикӑри канашӗ. Телефон: 62-03-58.

**Райадминистрацире**

## Хисеп грамотипе наградӑланӑ

***Ял хуҫалӑх производствинче нумай ҫул хушши тӑрӑшса ӗҫленӗшӗн ҫаксене район администрацийӗн пуҫлӑхӗн 2011 ҫулхи февралӗн 14-мӗшӗнчи 107 № йышӑнӑвӗпе район администрацийӗн Хисеп грамотипе наградӑланӑ:***

– **Зоя Валерьяновна ВАСИЛЬЕВӐНА**, Ильич яч. хис. хуҫалӑхӑн рабочине;

– **Венера Васильевна НИКИТИНӐНА**, Чкалов яч. хис. хуҫалӑхӑн уй-хир бригадин бригадирне;

– **Леонид Алексеевич ФИЛИППОВА**, Чкалов яч. хис. хуҫалӑхӑн механизаторне.

**Конкурс**

## Сайтӑн илемӗ те, усси те пулмалла

Информаци технологийӗсем ял ҫыннин пурнӑҫӗпе те тачӑ ҫыхӑнса тӑма пуҫларӗҫ. Кашни ял тӑрӑхӗн хӑйӗн сайчӗ пулнӑ май вырӑнта пурӑнакансем те унти хыпарсемпе тӑтӑшах паллашма пултараҫҫӗ.

Анчах та кашни ял тӑрӑхӗн сайчӗ тулли содержаниллӗ, ҫынсемшӗн усӑллӑ пулмалла. Унти информацие те ӑнланмалла чӗлхепе ҫырмалла. Кунсӑр пуҫне тата сайтсенче информацие вырнаҫтарасси те килӗшӳлӗх ыйтать.

Ҫак тата ытти хӑш-пӗр критерисемпе районти ял тӑрӑхӗсен сайчӗсене хаклама йышӑннӑ. **Конкурс апрелӗн 25-мӗшӗччен пырать. Ҫӗнтерӳҫӗсене виҫӗ номинацире палӑртаҫҫӗ: «Чи лайӑх сайт», «Чи лайӑх дизайнлӑ сайт» тата «Чи нумай усӑ куракан сайт»**. Ҫакӑнпа пӗрлех жюри чи япӑх сайтсене те палӑртать.

**Ҫитӗнӳ**

## Ентеше ӑнӑҫу сунатпӑр

В.В. Степанова районта чылайӑшӗ пӗлет. Вӗрентӳ сферинче ӑнӑҫлӑ ӗҫлерӗ, Шетмӗпуҫ шкул директорӗнче тимлерӗ. Районти комсомол организацине ертсе пычӗ. Парти райкомӗн органӗнче те вӑй хучӗ.

Унтан пурнӑҫ ҫулне улӑштарчӗ. Иккӗмӗш аслӑ пӗлӳ илнӗ хыҫҫӑн районти прокуратурӑра ӗҫлеме пуҫларӗ. Прокурор пулӑшаканӗнче, следовательте вӑй хучӗ. Пултаракан ҫын кирек ӑҫта та хастар иккен. Владимир Васильевич Муркаш прокуратуринче ӗҫленӗ ҫулсенче икӗ хутчен республикӑри чи лайӑх следователь ята тивӗҫрӗ.

Унтан В.В. Степанова Элӗк район прокурорӗ пулма шанчӗҫ. Халӗ вӑл Етӗрне район прокурорӗнче вӑй хурать. Яланхи пекех ответлӑха туйса саккунлӑхшӑн тӑрать.

Ҫак кунсенче Раҫҫей Генеральнӑй прокурорӗ В.В. Степанова прокуратура органӗнче нумай ҫул тӳрӗ кӑмӑлпа вӑй хунӑшӑн, хӑйӗн тивӗҫӗсене ҫӳллӗ шайра пурнӑҫланӑшӑн 3-мӗш степеньлӗ «За верность закону» медальпе наградӑланӑ.

Ентеше пысӑк ҫитӗнӳпе саламлатпӑр, малашнехи ӗҫре ӑнӑҫу сунатпӑр. **Хамӑр инф.**

**Саламлатпӑр**



Хаклӑ мӑшӑрӑма, юратнӑ аннене, ытарайми кукамая тата асаннене – Турай ял тӑрӑхӗнчи Уйкас ялӗнче пурӑнакан **Раиса Федоровна ПЕТРОВӐНА** ҫуралнӑ кунӗ ячӗпе ӑшшӑн саламлатпӑр. Эсӗ пурри пирӗншӗн питӗ пысӑк телей. Тавах сана ырӑ кӑмӑлушӑн. Эпир сана питӗ юрататпӑр, юнашар пурришӗн савӑнатпӑр. Сывлӑху сан ҫирӗп пултӑр, кунҫулу вӑрӑм та телейлӗ килтӗр. Пире савӑнтарса пурӑнма Турри нумай-нумай ҫул усратӑр.

**Саламлаканӗсем: мӑшӑрӗ, хӗрӗсемпе кӗрӳшӗсем, ывӑлӗпе кинӗ, 6 мӑнукӗ, хӑти-тӑхлачисем, сывӑх тӑванӗсем.**

Юратнӑ ҫыннӑмӑрсене, аттепе аннене, кукаҫипе кукамая, асаттепе асаннене – **Алевтина Ильиничнӑпа Юрий Иванович НАЛИМОВСЕНЕ** 55 ҫул тултарнӑ ятпа чун-чӗререн ӑшшӑн саламлатпӑр. Вӑрӑм кун-ҫул, иксӗлми вӑй-хал, ҫирӗп сывлӑх сунатпӑр. Эсир пурришӗн чунтан савӑнатпӑр. Сӗтел ҫинчен ҫӑкӑр-тӑвар ан татӑлтӑр, кӗрекӗр яланах тулли те пуян пултӑр. Эпир сире юрататпӑр. Хисеплӗ аттепе анне, сире татах та нумай ҫул пурӑнма вӑрӑм ӗмӗр сунатпӑр.

**Салампа: ывӑлӗпе кинӗ, 2 хӗрӗ, мӑнукӗсем.**

**Пӗлтерӳ**

## Ыйтусем кӗтетпӗр

Район хаҫатӗнче пичетленекен «Ыйту-хурав. Прокуратура хуравлать» рубрика валли район ҫыннисенчен ыйтусем кӗтетпӗр. Хӑвӑра кӑсӑклантаракан ыйтусене хаҫат редакцине 62-4-63 номерпе шӑнкӑравласа пӗлтерӗр. Районти прокуратура ӗҫченӗсем сире тивӗҫлӗ хурав парӗҫ.

**Ҫырӑнтару**

**Хаклӑ вулаканӑм!**

**Райхаҫата иккӗмӗш ҫур ҫултан илсе тӑма ҫырӑнтарас тапхӑр малалла пырать. Ҫырӑнтару хакӗ унччченхиех – 191 тенкӗ те 70 пус (ултӑ уйӑха).**

# Муркашрах шăл сиплеме май пулĕ

**Пĕрлехи информаци кунĕнчен**



Районта черетлĕ информаци кунĕ февралĕн 16-мĕшĕнче иртрĕ. Унăн теми – республикăри ĕç рынокĕнчи кăткăслăха чакарасси, граждансен 2010 çулта илнĕ тупăшĕсене декларацилесси, Чăваш Республикинче Раççей космонавтикин çулталăкне ирттересси. Республикăран килнĕ тата вырăнти ответлă ĕçченсем ушкăнсене пайланса районти тĕрлĕ ĕç коллективĕсенче пулса çынсемпе тĕл пулусем йĕркелерĕç, информаци кунĕн темине çутатрĕç, çынсене хумхантаракан ыйтусем çине хуравларĕç.

Хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсен тата ытти йышши техникăн техника шайне тĕрĕслесе тăракан республикăри патшалăх инспекцийĕн пуçлăхĕ – ЧР патшалăх тĕп инспектор инженерĕ В.П. Димитриев, район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, республика Патшалăх Канашĕн депутачĕ, «Муркашри тĕп больница» муниципаллă сывату учрежденийĕн тĕп врачĕ В.Г. Данилов çав кун чи малтанах район центрĕнче вырнаçнă «Путене» ача садĕнче **(сăн ӳкерчĕкре)** пулса курма кăмăл турĕç.

Кунти лару-тăрупа ача сачĕн заведующийĕ И.В. Ферапонтова паллаштарчĕ. Тирпейлĕх, йĕркелĕх хуçаланать ача садĕнче. Таса, хурласа нимĕн те калама май çук. В.П. Димитриев тĕрĕсех палăртрĕ: «Шупашкарти ача сачĕсем те хăшĕсем ку шая çитеймеççĕ-ха»,– терĕ вăл кунта пулса курнă хыççăн.

Чăннипех те шкул çулне çитмен ачасене килти пек туйма пур майсене те туса пама тăрăшаççĕ. Муркашран кăна мар, Хорнуйĕнчен те, Шаптакран та илсе килеççĕ ачасене кунта. Нумаях пулмасть чи пĕчĕккисем валли 12-мĕш ушкăн йĕркеленĕ. Кадрсем енĕпе те йĕркеллĕ. Воспитательсенчен ытларахăшĕ ятарлă аслă пĕлӳ илнĕ специалистсем. Ачасене кунне 5 хутчен апат çитереççĕ.

Çапах та хĕл кунĕсенче пӳлĕмсенче сывлăш температури пĕчĕкрех пулни палăрать. Мĕнпе çыхăннă-ха çакă? Чӳречесем пысăкрах. Суласемпе рамăсем хушшинчи хушăксене вата тултарса хутпа çыпăçтарнипех ăшă йĕркеллĕ сыхласа хăварма йывăр. Ача сачĕн хăйĕн уйрăм котельнăй çук. Ăшă тĕп котельнăйран шкула, больницăна тата ача садне пырса тăрать. Çитменнине котельнăй ача садĕнчен çӳллĕрех вырăнта вырнаçнă. Ăшăна пăрăхсем тăрăх насуссем хăвалаççĕ пулин те, аялалла вăл йĕркеллех пырса тăраймасть. Çак вăхăта чирлениме пула 30 яхăн ача садике çӳрейменни пӳлĕмсенче ăшă шайĕ кирлĕ нормăран катăкрах пулнипе те çыхăннах пулĕ.

Ку енĕпе пĕр хурав кăна пулма пултарать. Пĕр тăхтаса тăмасăр ача сачĕпе юнашар уйрăм топочнăй тума тытăнмалла. Паллах, тӳрех укçа-тенкĕ ыйтăвĕ тухса тăрать. Апла пулин те е спонсорсене явăçтарса та пулин ку ĕçе тытăнмаллах. Пĕр пуçласан вара лав вырăнтан тапранатех. Çакăн пек пĕтĕмлетӳ турĕç информаци кунне хутшăнакансем ача сачĕн коллективĕпе тĕл пулнă май.

Пушара пула районти тĕп больницăн стоматологи уйрăмĕ ĕçлеме пăрахнăччĕ. Халĕ ăна валли вырăнне те тупнă, кирлĕ оборудовани те кӳрсе килнĕ. Малашне стоматологи уйрăмĕ аптекăн иккĕмĕш хутĕнче пулĕ. Çак вăхăта кунта оборудовани вырнаçтараççĕ, йĕркелесе майлаштараççĕ, тасатса тирпейлеççĕ. Кунта та çитсе курчĕ информаци кунĕн ушкăнĕ, хатĕрленӳ ĕçĕсемпе кăмăллă юлчĕ.

Кайран вара информаци кунĕнче пулнисем районăн 2010 çулхи экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн итогĕсене пĕтĕмлетессипе район администрацийĕн ларусен залĕнче ирттерекен пухăвăн ĕçне хутшăнчĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Ыр кăмăллăх**

# Тав сăмахне тивĕçлисем

Тĕрĕссипе калас пулсан эпĕ район хаçатне хам астума пуçланăранпах çырăнса илетĕп. Халĕ юлашки çулсенче вăл ытла та интереслĕ, вулас килмелле тухма пуçларĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ республикăри ытти район хаçачĕсем хушшинче те малти вырăнсене йышăнать. Халиччен манăн пăшăрханмалли те, савăнмалли те пулни пирки çак хаçат урлă каласа парас кăмăл пулнă пулин те, пурнăçра пире ырă тунă çынсене ятранах асăнас тенĕ пулин те, именнĕ пулас, вăтаннă. Халĕ вара чăтаймарăм. Хамăра ыр тунă çынсем, пире те, ватăсене, пулăшма тăрăшакансем пирки кĕскен те пулин çырса пĕлтерсе кăмăл çĕнтерчĕ.

Ку ĕç январĕн 28-мĕшĕнче пулчĕ. Телевизорпа каçхине 9 сехетри çĕнĕ хыпарсене курса пĕтернĕ хыççăн çывăрма хатĕрленеттĕмĕр. Мĕн тăвăн, ачасем хулара тĕпленнĕ, килте эпир икĕ ватă çын кăна. Упăшка çывăрма кĕрсе выртрĕ. Эпĕ вара котельнăйне тухса кĕрем-ха терĕм. Те Турри асăрхаттарчĕ пулĕ. Тухрăм та газ çулăмĕ кăмакара мар, кăмака тулашĕнче çӳллĕ çулăмпах çунать. Часрах вентиле пăрса газа сӳнтертĕм, кĕрсе упăшкана вăратрăм. Телефонпа шăнкăравласа Шупашкарта пурăнакан хĕрĕмĕрсене, ял администрацийĕнче ĕçлекен хĕрарăма пĕлтертĕмĕр. Вĕсем пулăшнипе инкек пирки райгаз ĕçченĕсене хыпарлама пултартăмăр.

«Халь çĕрле никам та килес çук. Ирччен газсăр та шăнсах вилмĕпĕр-ха»,– тет упăшкам. 11 сехет тĕлне газовиксем килсе те çитрĕç. Çур çĕр иртни пĕр сехет çурăччен ĕçлерĕç вĕсем. Пире, карчăкпа старике, шăнса вилме памарĕç. Укçине те пĕр пус та илмерĕç. Уншăн тем пекех пысăк тав ыйхăсăр газовиксене. Ячĕсене ыйтса юлма иментĕм пулмалла. Нискасси тăрăхĕнчи каччăсем пулнине кăна пĕлсе юлтăм.

Çу кунĕсенче те газ сӳнсен юсав ĕçĕсем пурнăçланăччĕ. Ун чухне те çаксем пекех ырă çынсем тупăннăччĕ. Канмалли кун пулин те килсе юсаса пачĕç.

Кăçал юрĕ нумай çăвать те çул уçмаççĕ тесех калас килмест. Пур яла та кашни кунах уçса çитерме йывăр. Пирĕн ялта вара урам варрипе çырма. Пĕр енне çул уçма йывăрах мар, пирĕн енне пур чухне те çул уçсах тăраймаççĕ. Епле çитнĕ-ши ун чухне пирĕн пата газовиксем? Çăмăлах пулман паллах. Тепĕр хут тав сăмахĕ калас килет çакăн пек ырă çынсене.

**Нина КУДРЯВЦЕВА.**
Турхан ялĕ.

# Ĕçлеме пултаратпăр, çитменлĕхсене те курмаллах

**Район кунне палăртрăмăр**

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1 стр.).**

Шăрăх çанталăка пула ял хуçалăх культурисем пĕтнипе çĕр ĕçченĕ 476,4 миллион тенкĕ тăкак тӳснĕ. Нумай хуçалăхра вырăх апачĕ хатĕрлесси тивĕçлĕ шайра пулайман. Анчах çакна пăхмасăрах пур категориллĕ хуçалăхсене пĕрле шутласан районта 44,2 пин тонна сĕт, 6,2 пин тонна ашкакай туса илнĕ. Çаксем çинчен тата май пур çĕртех хăш-пĕр хуçалăхсем туса çитерейми ĕçсем пирки район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов тĕплĕ доклад туса пачĕ.

2010 çулта «Передовик» хуçалăхăн Ахманери 200 пуç ĕне вырнаçмалăх сĕт фермине реконструкцилесе пĕтернĕ. «Оринино» хуçалăхра çĕнĕ сĕт пăрăхĕ ĕçлеме пуçланă тата ку енпе «Свобода» хуçалăхра та ĕçсем пуçăннă. «Муркашри чăх-чĕп фабрики» уçă акционерлă общество çăмарта туса илессине çулсеренех ӳстерсе пырать. Çакна валли пĕлтĕр кунта чăхсене нумай шайлă читлĕхсенче тытма 2 цеха модернизациленĕ. Çулталăк хушшинче фабрика ĕçченĕсем чăх какайне суту-илĕве кăлариччен тирпейлемелли цеха ĕçе кĕртнĕ. Çак çĕнĕлĕхсем фабрикăна ирнĕ çул çăмарта туса илессине унчченхи çулхинчен 1,8 процент ӳстерсе 58 миллион штука çитерме май панă.

Районти промышленность предприятийĕсем пĕлтĕр пĕтĕмĕшле 1188,4 миллион тенкĕлĕх (2009 çулхипе танлаштарсан 169 процент) тавар туса кăларнă тата промышленность услугисем панă. Çулталăк хушшинче «Сеспель» хупă акционерлă обществăра кунта ĕçлекен пĕр çын пуçне 2150 пин тенкĕлĕх (2009 çулта 848 пин тенкĕлĕх пулнă) продукци туса кăларнă. Ĕçлекенсен пултарулăхне кура «Муркашри кирпĕч завочĕ» уçă акционерлă общество та кризис тыткăнĕнчен тухрĕ. Халĕ асăннă предприятин производство аталанăвĕ 2009 çул шайне çитрĕ.

«Моргауши-Хлеб», «Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсемпе «Моргаушимежрайгаз» филиал ĕçченĕсем те аталану çулĕпе мал туртăмлă утăмсем тăваççĕ. Ку савăнтарать кăна. Çав вăхăтрах «Моргаушкорм», «Вита» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсенче ĕçсен калăпăшне 27-63 процент, «Моргаушавтотехсервис» уçă акционерлă обществăра 40 процент чакарни пирĕн туса çитерейми ыйтусем те нумаййине кăтартать.

Муркаш ен пĕр вырăнта тăмасть. Рынока пысăк пахалăхлă таварсемпе тивĕçтерессинче, хушма ĕç вырăнĕсем туса хурассинче пĕчĕк тата вăтам предпринимательство пĕлтерĕшлĕ вырăнта. Кăçалхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне районта 132 пĕчĕк тата вăтам предприяти, 878 уйрăм предприниматель, 67 хресчен (фермер) хуçалăхĕ, потребительсен тата кредит кооперативĕсем 16 регистрациленнĕ. Пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăра пĕтĕмпе 2800 çын ĕçлет. Ку вăл район экономикинче вăй хуракансен 25 процентĕ. Иртнĕ çул пĕчĕк формăллă çак предприятисем 304,6 миллион тенкĕлĕх тавар туса кăларнă. Урăхла каласан пĕтĕм калăпăшăн 26 процентĕ.

Муниципаллă пĕрлешӳсенчи пĕчĕк предпринимательствăна аталанма пулăшассипе пăхнă программăсен конкурсне хутшăнса район иртнĕ çул 600 пин тенкĕлĕх грант выляса илчĕ. Кунсăр пуçне хăйсен ĕçне пуçăнассин тата производствăна анлăлатассин конкурсĕ витĕр тухса районти пĕчĕк предпринимательствăн 5 представителĕ 1200 пин тенкĕ выляса илме пултарчĕ.

Производство мал туртăмлă аталанни районта вĕрентӳпе спорт тытăмне те, халăх сывлăхне тивĕçлĕ пăхса тăрассине те çĕнĕ технологисен шайĕнче пурнăçа кĕртсе пыма пулăшать. Çак ĕçре çамрăксем маттур пулни вĕсенчен уйрăмах хастаррисем Чăваш Республикин Президенчĕн стипендийĕсене тивĕçни çирĕплетет. Район кунĕнче вĕсем савăнăçлă лару-тăрура хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсемпе ытти техникăна техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăракан Чăваш Республикин патшалăх инспекцийĕн ертӳçи – республикăри тĕп патшалăх инспектор инженерĕ В.П. Димитриев аллинчен стипендиат пулнине çирĕплетекен хутсене тивĕçрĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов Муркаш районĕнчи предприятисем, организацисем тата учрежденисем хушшинчи экономика ăмăртăвĕнче 2010 çул пĕтĕмлетĕвĕпе çĕнтернисене çак ятпа дипломсем, укçан парнесем тата вымпелсем парса чысларĕ.

Çамрăксене ĕçре вĕрентсе пынăшăн, ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши ăнăçлă вăй хунăшăн тата район аталанăвне пысăк тӳпе хывнăшăн «Росгосстрах» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн Чăваш Республикинчи филиалĕн Муркашри страхлакан пайĕн пуçлăхне Валерий Иванович Вязова, «АККОР-техпроект» проект институчĕ» уçă акционерлă обществăн генеральнăй директорне Геннадий Степанович Абросеева, Москакассинчи вăтам шкулта пуçламăш классене вĕрентекен Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учительне Светлана Федоровна Желтовăна, Чăваш АССР-ĕн К. Иванов ячĕллĕ патшалăх премийĕн лауреатне, РСФСР искусствисен тава тивĕçлĕ ĕçченне, Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ ĕçченне, педагога тата композитора Федор Семенович Васильева унăн çемйи урлă «Районăн хисеплĕ гражданинĕ» ят парса Муркаш районĕн Хисеп кĕнекине кĕртни те уявăн хăйне евĕрлĕхне çирĕплетрĕ кăна.

Район пуçлăхĕ И. Николаев тата район администрацийĕн ертӳçи Ю. Иванов тунă докладсене килнĕ хăнасем, пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен ертӳçисем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, мал туртăмлă çамрăксем, ятлă ветерансем анлăн сӳтсе яврĕç.

**А. БЕЛОВ.**



**Сăн ӳкерчĕкре: район кунĕнче «Районăн хисеплĕ гражданинĕ» ята тивĕçнисем (сулахайран сылтăмалла): С. Желтова, Ф. Васильевăн çемйи, В. Вязов, Г. Абросеев район ертӳçисемпе.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Кил тата хушма хуçалăх



## Тухăç никĕсĕ калчаран пуçланать



Ялта пурăнакансем валли

***Нарăс уйăхĕ вĕçленсе пынă май кун вăрăмланни те уçăмлăн палăрать. Апла пулсан сиссе те юлмăпăр – çурхи ака-суха, пахча ĕçĕсем пуçланĕç. Çак ответлă тапхăра тĕплĕ хатĕрленни çитес кĕр кунĕсем тулăх пулассипе тӳрременĕх çыхăннă. Çакна шута илсе паян эпир хамăр тĕпеле Оринин ял тăрăхĕнчи Тереç ялĕнче пурăнакан пуян опытлă агроном-пахчаçăна Александр Матвеевич ШАРИКОВА чĕнтĕмĕр. Специалист каласа пани килти хушма хуçалăхра пахча çимĕç туса илессипе интересленекен кашни ял çыннишĕнех вырăнлă пулĕ.***

**– Александр Матвеевич, эсир пахча çимĕç туса илессипе пысăк опыт пухнă специалист. Çак ĕç вăрттăнлăхĕсене пĕлменнисене тата пахча çимĕç туса илессипе ĕçлеме тин кăна пуçăнакансене хĕлĕн юлашки кунĕсенче мĕн калайратăр?**

– Пулас тухăç пирки паянах шутлама пуçланине питĕ ырлатăп. Куратăр ĕнтĕ, кун тăршшĕ 3 сехете майлă тăсăлчĕ. Паянхи сивĕсем кĕçех çуркуннехи ăшă кунсемпе ылмашăнĕç. Хĕвел ăшши те пахчасене юртан тасатĕ. Сад ăстисем йăрансем хатĕрлесе унта пахча çимĕç лартса тухĕç, пулас тухăçшăн вăй хурса ĕçлеме пуçлĕç.

**ПОМИДОР ТУСА ИЛЕССИ**

**– Йăрансем çинче паянхи ял çынни вун-вун тĕрлĕ пахча çимĕç ӳстерме тăрăшать. Çак ĕçре вара кашни культурăн хăйне евĕр вăрттăнлăхсемпе ачашлăхсем пур. Çуркунне çитсен кашни килтех помидор лартасси çине тимлĕх уйăраççĕ. Анчах тухăçĕ пурин те пĕрешкел пулмасть. Çак культурăна ăнăçлă туса илме мĕн пĕлмелле-ши?**

– Помидор тухăçĕ калчаран пуçланать. Вăл ăнса пултăр тесен килти условисенче помидор калчи туса илекенĕн вăрлăха акас умĕн ăна имçамлама манмалла мар. Çавна валли эпĕ вăрлăха 1 процентлă марганцовка ирĕлчĕкĕнче 15-20 минутран кая мар тытатăп. Çакăн хыççăн тин вăрлăха лайăх пахалăхлă тăпра тултарнă ещĕксене 1,5 сантиметр тарăнăшне ретсенче 2-шер сантиметрта, ретсем хушшине 4-шар сантиметр хурса варăнтаратăп. Акмалли тăпрана ăшă шывпа шăваратăп. Вăрлăх тĕрĕс-тĕкел шăтса тухтăр тесе ещĕке полиэтиленпа витетĕп те ăшă вырăна вырнаçтаратăп. Вăрлăх шăтса тухнă май полиэтилена илетĕп те ещĕке кăнтăр енчи чӳрече умне хĕвел питне вырнаçтаратăп. Ӳснĕçемĕн калча пĕр еннелле ан сулăнтăр тесе ещĕке тăтăшах çавăрса таратăп.

**– Акмалли вăхăт пирки уйрăммăн каламăр-ши?**

– Чи ир пулакан помидор калчине йăран çине кăларса лартиччен 65-70 кун маларах акмалла. Ку вăхăт нарăс уйăхĕн 10-25-мĕшĕсемпе тӳр килет. Çак майпа помидор туса илес текенсем малтанхи çимĕçсене çĕртме уйăхĕн вĕçĕнчех активме пултараççĕ. Вĕсем çак çулпа кайса çурла уйăхĕн 1-мĕшĕччен кашни тăваткал метртан 3 – 4 килограмм помидор пуçтарма пултараççĕ. Çу каçа илекен пĕтĕмĕшле тухăç 7 – 8 килограма çитме те пултарать.

Калча тăвакан ака технологине пăхăнсан вăл 4 – 5 кунтан шăтса тухать. Калчана пиçĕхтерни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çак тĕллевпе кил хуçин эрнеренех калчана кăнтăрла 13 – 15 градусра, çĕрле 7 – 9 градус ăшăра тытассине йĕркелемелле.

18 – 20 кун иртсен, калчан 2-3 çулçă тухсан, ăна куçарса сайралатни вырăнлă. Çакна валли вĕсене 10х10 см калăпăшлă куршаксене куçарса лартмалла. Кун хыççăн çĕрлехи сывлăш температурине 11 – 14 градуса çити ӳстермелле.

**– Шăварнă çĕрте вăрттăнлăхсем пур-и?**

– Талăкра пĕр тăваткал метр пуçне 10-20 литр шыв кирлĕ пулать. Пĕр тăваткал метр çинчи калчана 2 – 3 хутчен 10 литр шыв çине 5 грамм аммиак селитри, 40 грамм суперфосфат, 15 грамм кӳкĕрт хушса тунă шĕвекпе апатлантармалла. 2 – 3-мĕш хут шăварнă чухне удобрени виçине 2 хут ӳстермелле.

**ПĂРĂÇ – ПАХЧА ИЛЕМĔ**

**– Юлашки çулсенче кашни кил хуçи арăмех тутлă пăрăç лартса ӳстерме тăрăшать. Ăна валли те килтех калча туса илсен аван пулмалла. Кунта мĕнле сĕнӳсем парайратăр?**

– Чăнах та хальхи вăхăтра тутлă пăрăç йăрансен илемĕ пулса кайрĕ. Çак культура пур пахчана куç илмесĕр пăхас килет. Ăна валли килти хушма хуçалăхрах калча тăвас тесен нарăс уйăхĕ вĕçлениччен тутлă пăрăç вăрлăхне акса хăварма тăрăшмалла. Çакна валли малтан акмалли çĕр хатĕрлемелле. Кунта çĕрĕк тăприпе улăхран илнĕ çĕре пĕр пек виçепе хутăштармалла. Пĕр витре хутăш çине çур литр йывăç кĕлĕ тата 1 кг юхан шыв хăйăрĕ хушмалла. Вăрлăха акиччен 1 процентлă марганцовка ирĕлчĕкĕнче тытмалла, ӳсме пулăшакан стимуляторта ислетмелле, сăмсалантармалла та ретсенчи хушăна 5 см хăварса акмалла. Вăхăт иртнĕ май вăйсăррисене иртмелле. Ака уйăхĕн иккĕмĕш çуринче калчана теплицăсене куçарса лартмалла. Уçă йăран çине вĕсене çу уйăхĕн 20-мĕшĕ хыççăн кăларса лартма юрать.

Нумай çулхи сăнав çакна çирĕплетет. Теплицăсене куçарса лартнă хыççăн тымарсене кăшт амантса уçă йăран çине лартсан тутлă пăрăç лайăх аталанса каять, пысăк тухăç парать. Йăран çинче тутлă пăрăç речĕсем хушши 60 см, ретри калчасем хушши 40 см пулмалла. Лартас умĕн йăрансем çинчи шăтăксене 1 – 2 кг çĕрĕк тăпри тата кăштах йывăç кĕлĕ хумалла.

**– Тутлă пăрăçăн сиплĕ енĕсем пирки мĕн те пулин калайратăр-и?**

– Ытти пахча çимĕç пекех тутлă пăрăç та пирĕн организмшăн усăллă çимĕç. Вăл юн тымарĕсене çирĕплетет, организмран холестерин кăларать, аппетита лайăхлатать.

Калаçăва вĕçлесе çакна калас килет. Паянхи кунсемпе туллин усă курса çитес çурхи ĕçсем пирки тĕрлĕ кĕнекесемпе пайлашни усăллă.

**А. ПЕТРОВ**
**калаçнă.**

Ыйту – хурав

## Хăш выльăх мĕн чухлĕ пурăнать?

***– Килти хуçалăхра выльăх тытса усраканшăн ку е тепĕр йышши выльăх миçе çул таран пурăнма пултарни пирки пĕлни пĕлтерĕшсĕр мар. Малашнехи плансене палăртассипе те çыхăннă çакă. Хаçатра ун пирки çырса кăтартма май çук-ши?***

**В. СМИРНОВА.**

Мăн Сĕнтĕр ялĕ.

– Ку вăл выльăха епле, мĕнле условисенче пăхса усранипе те, ытти сăлтавсемпе те çыхăннах ĕнтĕ. Çапах та вăтам виçене илсе кăтартма пулать. Сăмахран, мăйракаллă шултра выльăх вăтамран 15–20 çул таран пурăнать. Çав вăхăтрах 40 çул таран пурăннă тĕслĕхсем те пур. Сурăх 12–15 çул, качака 10–15 çул пурăнать. Сыснасем кăшт ытларах пурăнаççĕ – 15–20 çул. Йытăсем 10–20 çул, кушаксем 8–12 çул, килти кайăк-кĕшĕк 10–12 çул пурăнни паллă.

Пахча çимĕçпе усă куратпăр

## Йӳçĕтнĕ купăста

***Иртнĕ çул лайăх шăварса тăнипе купăста япăх мар тухăç пачĕ. Нӳхрепре паян вăл нумай. Купăстана йӳçĕтсе çисен лайăхрах-ши е маринадласан? Манăн ыйту çине хурав паракан ăстаçă пурах пуль?***

**А. АВВАКУМОВ.**

Ял çынни пахчасенче çулленех купăста нумай туса илет. Çавна май унпа усă курасси çинчен калаçнă чух сăмах часчасах йӳçĕтнĕ купăста çине кĕрсе каять.

Мĕнпе лайăх-ха йĕçĕтнĕ купăста?

Йӳçĕтнĕ купăста – лайăх апат-çимĕç. Пирĕн çĕр-шыври пĕр уяв та сĕтел çине йӳçĕтнĕ купăста лартмасăр иртмест. Анчах шутлатпăр-и-ха эпир çак çимĕçре мĕн чухлĕ витаминсемпе усăллă япаласем пурри пирки?

Пирĕн климат условийĕсенче йӳçĕтнĕ купăста хĕллехи вăхăтра организма С витаминпа тивĕçтермелли чи меллĕ çăл куç. Тĕрĕс йӳçĕтнĕ купăстара С витамин хисепĕ лимонрипе танлашать. Хĕл кунĕсенче купăста организма кирлĕ апат-çимĕç те. Йӳçĕтнĕ купăстана çĕр улмипе çисе курнă-и? Хĕл кунĕсенче кунран пахарах апат тупаймăн та!

Йӳçĕтнĕ купăстара усăллă енсене ытларах упраса хăварасси – кил хуçи хĕрарăмĕсен тĕп тĕллевĕ. Манмалла мар, çакна валли йӳçĕтнĕ купăстана сивĕ çĕрте тытмалла, рассол шывĕ çителĕклĕ пулмалла. Йӳçĕтнĕ купăстана шăнтма та пулать. Анчах кун пек упранă чух вăл пĕр уйăхра С витамин виçине 10 – 15 процент çухатать. Шăнтнă купăстана ирĕлтерсе тепре шăнтас пулсан С витамин 30 – 40 процентах çухалать. Йӳçĕтнĕ купăстана шывпа çума юрамасть: кун пек тусан унăн пĕтĕм пахалăхĕ çухалать.

Йӳçĕтнĕ купăстана клюква, кишĕр, брусника, пан улми хушни С витамина ытларах упрама май парать. Купăстана йӳçĕтсен унри С, В2, РР витаминсем тата ытти усăллă япаласем рассола тухаççĕ. Çавăнпа та халăх медицининче иммунитет системи хавшанă çынсене, аппетит лайăхлатма, гиповитаминоз чухне т. ыт. те йӳçĕтнĕ купăста рассолне ĕçме сĕнеççĕ. Ăна ăшăлла, апатланас умĕн е апатланнă вăхăтра çуршар стакан ĕçмелле. Шăл тунисем ыратнă чух унпа çăвара чӳхени те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Маринадланă купăста вара йӳçĕтнинчен катара тăрать. Мĕншĕн тесен маринадланă чух хушнă уксуспа усăллă бактерисем нумай вилеççĕ.

**В. НИКИТИНА,**
**пахчаçă.**

Пĕлме интереслĕ

## Çĕнĕ сăн кĕрĕ

Сирĕн алкана, çĕрĕне тĕксĕм сăн çапрĕ-и? Ан пăлханăр, пирĕн сĕнӳсемпе усă курсан вĕсен сăнсăпачĕ улшăнĕ. Ылтăнран хатĕрленĕ япаласене скипидар, одеколон е тата çăмарта шуррипе йĕпетнĕ ватăпа сăтăрса пăхăр. Вăл самай çуталнине асăрхатăр.

Кĕмĕлрен тата мельхиортан тунă илемсене 8 процентлă уксуспа йĕпетнĕ пусмапа сăтăрăр, ун хыççăн типĕтĕр. Вĕсене çĕнĕ сăн-сăпат кĕртмелли мел вара чылай. Кĕмĕл алкана, çĕрĕне лимон сĕткенĕпе те сăтăрса пăхма юрать. Анчах та çапла тунă хыççăн вĕсене вĕри шывпа çуса илме ан манăр.

Сирĕн хуçалăхра пăхăртан, латуньрен хатĕрленĕ япаласене кивĕ сăн çапнă-и?

Ан пăлханăр, вĕсене уксуспа хутăштарнă тăварпа сăтăрăр. Ун хыççăн вара ăшă, кайран сивĕ шывпа чӳхемелле.

## «Хамăр хуçалăха аталантарни – пирĕн тĕрек»

Тăрăшулăхра телей туптанать



«Ĕçрен ан хăра, вăл хăй санран хăратăр», вĕрентет ваттисен сăмахĕ. Çакна ачаллах ăша хывнисем паян ӳсĕмлĕ ĕçленине тата вĕсем çĕнсе илнĕ картлашкасене куратăн та ялта та тухăçлă ĕçлесе тĕреклĕ пурăнма май пуррине асăрхатăн.

Йӳçкасси ял тăрăхне кĕрекен Вăрманкасси ялĕнче пурăнакан Степановсен кил хуçалăхне кăнтăрла çитрĕмĕр. Кил хуçи – «Ударник» хуçалăхăн Вăрманкассинчи сысна ферммин заведующийĕ Михаил Андреевич – ĕçреччĕ. Унăн мăшăрĕ эпир çитнĕ чух кил хушшинче хурсене апатлантаратчĕ.

– Шучĕ чылайччĕ-ха та пусса пĕтертĕмĕр. Кусем вара çитес çулхи хур кĕтĕвĕн никĕсĕ. Ялта хуркăвакалпа выльăх-чĕрлĕх тытмасăр майĕ çук. Асатте-асаннесенчен пыракан çак йăлана эпир те пăрахмастпăр. Килти хушма хуçалăха аталантарсах çемье тупăшне ӳстеретпĕр, – шăкăл-шăкăл калаçать 50 çулхи Людмила Ивановна Степанова мăшăрĕ ĕçрен таврăнайманнине пĕлтерсе.

11 ачаллă çемьере ӳснĕ Людмила ачаллах выльăх-чĕрлĕхпе çывăх туслашнă. Амăшĕ дояркăра ĕçленĕрен хĕр пĕрчи 5 çултах ĕне сума вĕреннĕ. Нумай ачаллă ашшĕпе амăшĕ çемьене тăрантарса пурăнма ĕмĕрĕпех чылай выльăх усранă. Ĕç юратăвне ачисене те парса хăварнă.

– Паян эпĕ ĕçлемесĕр ларма пултараймастăп. Мăшăрăмпа иксĕмĕр ĕç пайламасăр пурне те вăхăтра туса пыма тăрăшатпăр. Пĕрлехи тимлĕхпе эпир паян сумалли икĕ ĕне, çулталăкри вăкăр, 3-4 сурăхпа 3-4 сысна, чăхчĕппе хур-кăвакал тытатпăр. Тăрăшса ĕçлесен кашниех тупăш парать, – пӳрте кĕрсе диван çине вырнаçнă май калаçать Л. Степанова.

Кил хуçи хĕрарăмĕн сăмахĕнчен ĕçпе туслă мăшăр «Ударник» хуçалăхра вăй хурсах тата килти хушма хуçалăха аталантарсах тĕреклĕ пӳрт-çурт çавăрни курăнчĕ. Паян вĕсен килçурчĕ таврашĕнче урлă выртакан япалана кураймастăн та. Икĕ ывăлпа хĕрĕ те ĕçрен ютшăнманни – ашшĕпе амăшĕшĕн паян хăйне евĕр пурнăç парни. Людмила Ивановна кун пирки Снежанна кинĕ çине пăхса **(сăн ӳкерчĕкре)** кăмăллăн пĕлтерчĕ.

Икĕ ĕне терĕмĕр те, Степановсем килти хушма хуçалăхри ытлашши сĕте пĕтĕмпех Муркаш районĕн хатĕрлевçисене сутаççĕ. «Ку та çемье тĕкки», – терĕ калаçма ютшăнман хĕрарăм. Хам та килти хушма хуçалăх тытнăран çак сăмахсемпе пĕтĕмпех килĕшрĕм.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



# Çĕнĕлĕх пуриншĕн те усăллă пулмалла



Сывлăх сыхлавĕ

***Февралĕн 15-мĕшĕнче районти медицина ĕçченĕсем иртнĕ çулхи ĕçе тишкерсе малалла мĕнле ыйтусем çине тимлĕх ытларах уйăрса ĕçлемелли пирки пухăнса каларĕç.***

***В.Г. Даниловла Л.И. Самушков тĕп врачсен сăмахĕнче те, Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин тĕп эксперт специалисчĕ Л.Г. Ронжина тухса калаçнинче те модернизаци ыйтăвĕ тĕп вырăнта пулчĕ. Сывлăх сыхлавĕн модернизаци программи ĕçленипе кăçал тата малаллахи çулсенче мĕнле улшăнусем кĕтеççĕ-ха пире?***

Малтанах модернизаци виçĕ енлĕн пулса пынине каламалла. Пĕрремĕшĕ – сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсен пурлăх базине пуянлатасси, çĕнетсе çирĕплетесси. Иккĕмĕшĕ информаци технологийĕсен енне пырса тивет. Виççĕмĕшĕ – медицина пулăшăвĕ памалли стандартсемпе ĕçлесси. Программăпа пăхса хунă çĕнĕлĕхсем ытларах хула больницисене тата районсем хушшинчи медицина центрĕсене ура çине çирĕпрех тăма май параççĕ. Апла пулин те модернизаци пирĕн района 22 миллион тенкĕ ытла «илсе килмелле».

Пурлăх бази пирки. Кăçал акă Мăн Сĕнтĕрти больницăн хирурги уйрăмĕ вырнаçнă çуртăн çивиттине çĕнетме хатĕрленеççĕ. Çакна Мăн Сĕнтĕрсем юсав ĕçĕн проектне вăхăтра тунипе тивĕçнĕ. Тепĕр майлă каласан модернизаци программи те тăрăшакансене кăмăллать. Малашне Муркаш районĕнче те маммографи тишкерĕвĕ ирттерме май пулĕ. Ăна валли ятарлă оборудовани пулать тесе Владислав Григорьевич çирĕппĕнех каларĕ. Онколог врач Н.А. Кожевников хĕрарăмсен сĕт парĕсене тĕрĕслесе шыçăна вăхăтра тупса палăртасси çивĕч тăнине пĕлтерчĕ. Чире, шел пулин те, ытларах чухне пуçламăш тапхăрта мар, вăрах вăхăтран çеç тупса палăртни ăна сиплессинче пысăк пăтăрмах кӳрет. Апла маммограф пулăшнипе, фельдшерсене те тĕрĕслев вăхăтĕнче çак чире тупса палăртма вĕрентни ĕçе усăмлатма пулăшассине шанас килет. Кунсăр пуçне программа Муркашсене УЗИ аппарачĕсем, фибробронхоскоп туянма та пулăшĕ. Çĕнĕ тата хаклă йышши оборудовани чирсене вăхăтра тата тĕрĕс тупса палăртма май парĕ.

Хальхи информаци технологийĕсемпе ĕçлеме тытăнни вара врачпа пациент хушшинчи «кирлĕ мар» хут çырассине пĕтерме май парать. Больницăна пыракан çыннăн черетре тăмасăрах врач патне черете çырăнма пултарĕ. Медицина картти те электронлă майпа тулса пырĕ. Сăмахран, анализсен пĕтĕмлетĕвĕ те учрежденири электронлă çыхăну урлă çав карттă çине çырăнса пырĕ. Электронлă çыхăну район тата республика шайĕнчи больницăсене те çыхăнтарма тивĕç.

Электронлă карттă пулни вара кашни çыннах стандартпа сипleme май парать. Стандартпа ĕçлесси диагностика тата сиплев процедури мĕнле пулмаллине çирĕплетет. Апла пулсан врачăн кашни çыннах пĕр пек сиплемелле, анчах çав вăхăтрах кашни çыннăн уйрăмлăхĕсене те шута илмелли куç кĕрет.

Паллах ĕç çĕнĕлĕх таврa кăна пулмĕ. Сывлăхпа çыхăннă районти тĕллевĕ программăсене палăртнине пĕтĕмпех пурнăçа кĕртме палăртасçĕ медицина ĕçченĕсем. Ачасемпе çамрăксен сывлăхĕ çине те тимлĕх ытларах пулĕ. Çамрăксене акă кăçал диспансеризаци те кĕтет.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Г. Толстова медицина сестрин ĕçне республика шайĕнче лайăх хак пачĕç.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Йыхрав

## Атапайсем вăйлисене чĕнеççĕ

Нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕнче Атапайри вĕрентӳпе культура центрĕнче кире пуканĕ çĕклессипе ăмăрту пулать. Ăна спорт мастăрĕ пулнă Ю.И. Ковалева халалласа тата М.И. Музыков спорт мастăрĕн кандидачĕн парнисене çĕнсе илессишĕн ирттереççĕ. Унта хутшăнма шкулта вĕренекенсене йыхравлаççĕ.

Категори виçисем çапла: арçын ачасем – 58, 63, 68, 73, 78 кг, хĕрсем – 60 кг е ытларах. Кире пуканĕн йывăрăшĕ 16 кг.

Амăрту 12 сехетре пуçланать. Хăвăрпа пĕрле врач ăмăртăва хутшăнма ирĕк парса алă пуснă хут илме ан манăр.

**Йĕркелӳ комитечĕ.**

## Шкул ачисене йĕлтĕр йĕрĕ йыхравлать

Февралĕн 26 – 27-мĕшĕсенче шкул ачисен йĕлтĕрпе чупас енĕпе ăмăртусем иртеççĕ. Малтанхи кунне йĕлтĕрçĕсем Чăваш Республикин чемпионне Ю. Федотова асăнса эстафетăна тухаççĕ. Çак ăмăрту Калайкассинче иртет. 11 сехетре пуçланать.

Иккĕмĕш кунне Муркашри стадионта шкул ачисен спартакиади шучĕпе йĕлтĕрçĕсен чупăвĕ пулать. Ăмăрту Муркашри стадионта 10 сехетре пуçланать. Пурне те кĕтетпĕр. **В. ПЕТРОВ.**

Спорт

## Маттур, Настя!

Февралĕн 8–12-мĕшĕсенче Саранск хулинче Атăлçи федераллă округра мала тухассишĕн биатлон енĕпе ăмăрту иртрĕ. Унпа пĕрлех – Раççейри вĕренекенсен V спартакиадин виççĕмĕш тапхăрĕ те.

Районти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕнче ăсталăха туптакан Анастасия Костина (тренерĕ Э.А. Гордеев) ăмăртăвăн спринт чупăвĕнче 9-мĕш пулнă, уйрăм чупура вара мала тухнисен картлашки çине хăпарма пултарнă. Аслă çулхи хĕрсен ӳсĕмĕнче 10 çухрăмлă дистанципе ăмăртса виççĕмĕш вырăн йышăннă. Çапла майпа Анастасия март уйăхĕнче Ижевск хулинче иртекен Раççей чемпионатне хутшăнать. Ăнăçусем ăна!

**Т. ЕРМОЛАЕВА.**

**БЕТОН, РАСТВОР любых марок**
**Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778.**
**Песок, ОПГС (гравмасса), щебень**
**Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440.**
**Доставка миксерами, самосвалами. 5-50.**

В Москву и Московскую обл. требуются:
фасовщицы-упаковщицы,грузчики
(кондитерские фабрики, молочное производство, снековая продукция, мясокомбинаты, склады).
Питание, проживание предоставляются.
Вахта. З/п от 20000 руб. (сдельная).
Тел.: 8(8352)23-22-22. 3-5.

**Прогноз погоды с 19 по 25 февраля 2011 года** www.yandex.ru

| сб 19 | вс 20 | пн 21 | вт 22 | ср 23 | чт 24 | пт 25 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| облачно | ясно | ясно | ясно | ясно | ясно | переменная облачность |
| –20 | –20 | –21 | –20 | –19 | –18 | –16 |
| –24 | –29 | –28 | –27 | –26 | –25 | –23 |

### «Шыв юхать те чул юлать, ĕмĕр иртет кун юлать» ярăмран

Юрлать ял шывĕ шăнкăр-шăнкăр!
Сасси ача чунне лăпкать.
Шыв шевлисем кĕреççĕ чăпăл,
Кăмăлăма ку якатать.
Выртать ун çулĕ ĕмĕт витĕр,
Вăл пурнăç ытамне аскать.
Эп те сана курмашкăн çитĕп
Кĕçех, хитре тĕнче – Муркаш!
Пит илĕртет малаш илемĕ:
Паллашăп Аслă халăхпа.
«Ялтан»,– тесе Муркаш тиркемĕ.
Ăсли вĕрентĕ пурăнма.
Юхать ял шывĕ шăнкăр-шăнкăр!
Яш ĕмĕт çунатне сарать.
Çуркуннене иленнĕн шăпчăк
Чĕрем Шупашкара туртать.
Унта çуртсем тӳпе арчи пек,
Чăваш хăвачĕ – Улăпла.
Унта эп çамрăклах вĕренĕп
Пуçа таймашкăн Атăла.
Кунсем иртеççĕ сисĕнмесĕр,
Çулсем юхаç юхан шывла.
Шăпам тĕнче хĕрне çитерчĕ,
Ман ĕмĕр витĕр тухмалла.
Умра – Мускав, ав, йăлтăр-ялтăр,
Париж мăнаçлăн çуталать.
Çапах тунра ман темшĕн тăвăр...
Час-час аса илеп яла.
Кунта мана, тен, халь палламĕç,
Çын пек пăхĕç сăнаса.
Çапах, туяп: Муркаш саламĕ
Ачалăхри пекех таса.
Ан тив, никам та ан паллатăр!
Çав чулсемех шывра выртаç –
Мана кĕтсе якалнă, ахăр.
Чунра – шыв шевлисен выляç.

**Олег ПРОКОПЬЕВ.**

**ВОЗРАЖЕНИЕ**

**12 февраля 2011 года состоялся сход граждан села Ильинка, который рассмотрел вопрос «О самовольном, противоправном захвате земли в селе Ильинка и запрете строительных работ по установке мачты сотовой связи подрядчиками компании «Би Лайн» в лице ООО «СК «СпецСтройСтандарт» и принял решение: «Не давать согласия на строительство мачты сотовой связи компании «Би Лайн» на территории села Ильинка Моргаушского района».**

**Инициативная группа.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Спутниковые антенны «ТРИКОЛОР».**
**Установка, гарантия. 6800 руб.**
**Тел.: 8-905-345-77-19. 2-5.**

**Проекты домов, электро- и газоснабжения, сметы. Свид. СРО. ООО «Инттехс». с. Моргауши, ул. Мира, 9А. Тел.: 62-6-03. 4-5.**

* * *

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 6-7.**

* * *

**Декор – мебель изготавливает любую корпусную мебель (кухни, прихожие, мини-стенки, детские, компьютерные столы) по размерам заказчика. Замер и доставка бесплатно. Гарантия качества. Предлагает услуги: установка дверей, укладка линолеума и ламинированных полов, устройство потолков, обшивка стен, устройство крыш и мансард, устройство сайдингом. Наш адрес: 429530, с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 3. Тел.: 62-6-60, 8-905-343-08-10. 5-5.**

* * *

**Куплю корову, бычка, телку.**
**Тел.: 8-905-342-39-43. 3-5.**

* * *

**Продаем сено. Доставка бесплатно.**
**Тел.: 8-919-679-18-11, 8-927-859-91-55. 1-2.**

* * *

**ЛЕЧЕНИЕ АЛКОГОЛИЗМА**
**(г. Чебоксары, пр. Ленина, 32А, тел.: (8352)55-16-60, 8-902-327-08-17). Лиц. № ФС21-000353 от 05.03.2010 г. Требуется консультация врача. 5-5.**

* * *

**ЗАО «Чебоксарское предприятие «Сеспель» срочно требуется слесарь по ремонту станочного оборудования с гидросистемой, с опытом работы. Оплата высокая. Обращаться по телефону: 8-903-358-69-83. 1-3.**

* * *

**НО «ФОНД «ВОЗРОЖДЕНИЕ ХРАМОВ»**
**Продает настенные православные календари (формат А-3, св. Николай) от 5 рублей; бесплатное страхование от несчастных случаев на 10 тыс. руб. через страховые компании. Адрес: с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 2. Тел.: 8-905-342-11-50. 4-7.**

* * *

**Продаю керамзитобетонные блоки, песок речной, гравмассу. Адрес: «Моргаушагропромснаб».**
**Тел.: 8-905-340-07-78. 4-5.**

* * *

**Куплю недорого земельный участок с ветхим домом. Тел.: 8-905-027-05-07.**

* * *

**Продаем доски обрезные, необрезные; брус: 200х200, 150х150, 150х100, 100х100. Изготовим срубы рубленые, оцилиндрованные. Тел.: 8-919-679-18-11. 3-5.**

* * *

**Бурение, добуривание колодцев. Кольца имеются.**
**Тел.: 8-965-685-89-75. 3-5.**

* * *

**Срочно продаю участок земли 11 – 15 соток в центре с. Б. Сундырь по ул. Ленина, д. 42. Тел.: 8-905-344-06-26.**

* * *

**Вăкăр, тына, пăру, сурăх туянатпăр.**
**Тел.: 8-903-063-07-57.**

* * *

**Халăхран хаклă хакпа ĕне, вăкăр, тына ашăн е чĕрĕ виçепе туянатпăр. Тел.: 8-919-671-96-26. 1-10.**

* * *

**Куплю корову. Дорого. Тел.: 8-905-343-15-48. Куплю бычков, телок, КРС. Дорого. Тел.: 8-927-997-21-48. 2-4.**

* * *

**К сведению абонентов-пользователей газа, не имеющих приборов учета расхода газа!**

В соответствии с Федеральным законом от 23.11.2009г. №261-ФЗ «Об энергосбережении и повышении энергетической эффективности и о внесении изменений в отдельные законодательные акты Российской Федерации» собственники жилых домов (квартир в многоквартирном жилом доме) обязаны в срок до 01.01.2012г. обеспечить установку и ввод в эксплуатацию приборов учета расхода газа.

Филиал «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз» предлагает свои услуги по установке, замене, эксплуатации (обслуживанию и поверке) приборов учета расхода газа. Для того, чтобы воспользоваться настоящим предложением, Вам необходимо:

1. Обратиться в Моргаушский абонентский участок ООО «Газпром межрегионгаз Чебоксары» для оформления заявления на согласование установки и определения типоразмеров счетчика;
2. С согласованным заявлением обратиться в филиал «Моргаушимежрайгаз» для заключения договора на установку прибора учета расхода газа.

**Филиал «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз».**

**2-2.**

Муркаш райпо коллективĕ Ярапайкасси магазин заведующийĕн Т.В. Якушкинăн тăван ашшĕ
**Виталий Петрович**
**СОКОЛОВ**
сарăмсăр вилсе кайнă пирки çывăх çыннисемпе, тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Сыпайри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ кунта физкультура учителĕнче ĕçлекен Е.В. Соколовăн ашшĕ
**Виталий Петрович**
**СОКОЛОВ**
вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.
Пичете панă 18.02.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4305.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.